28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1945
ОКТЯБРЬ
3
ЮНКУН
192(6943) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

ВКП(б) ОБКОМĔНЧЕ

Государствăна тырă, çĕрулми, пахчаçимĕç пĕтĕмпех парса татмалли тата авăн çапса пĕтермелли уйăхлăх ирттерессi çинчен

Государствăна тырă, çĕрулми, пахча çимĕç парас тĕлĕшпе республика кая юлса пынине пĕтерес тата хамăр илнĕ обязательствăсене вăхăтра пурнăçа кĕртес шутпа, ВКП(б) Обкомĕ октябрĕн 1-мĕшĕпе ноябрĕн 1-мĕшĕ хушшинче государствăна тырă, çĕрулми, пахчаçимĕç пĕтĕмпех парса татмалли тата авăн çапса пĕтермелли уйăхлăх ирттерме йышăннă.

Государствăна срокчен тырă парса татас тĕлĕшпе илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçа кĕртес тесе, ВКП(б) Обкомĕ выранти партипе совет организацийĕсене, колхозсен руководителĕсене уйăхлăх вăхăтĕнче государствăна тырă, çĕрулми, пахчаçимĕç пĕтĕмпех парса татас тата авăн çапса пĕтерес ĕçе мĕнпур вăйсемпе майсене мобилизацилеме чĕнет.

ВКП(б) Обкомĕ парти райкомĕсене уйăхлăх çинчен колхозниксемпе колхозницăсене, трактористсене, МТС-семпе совхозсен работникĕсене анлăн ăнлантарса пама тата вĕсене уйăхлăх вăхăтĕнчи ĕçсене пурне те ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕ çĕре мобилизацилеме хушать.

Чăваш АССР-чи колхозсемпе совхозсенче кĕрхи çĕртме тăвас ĕç мĕнле пыни çинчен

ВКП(б) Чăваш Обком бюровĕн постановленийĕ

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çакна палăртать: 1946 çулта çуракине аппаçлăн ирттерес тата вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе кĕрхи çĕртме сухине вăхăтра туса хаварни çав тери пысăк выран йышанса тарать пулин те, нумай районсенчи партипе совет органĕсем кĕрхи çĕртме сухи тăвас ĕçе çителĕксĕр ертсе пыраççĕ, ăна тырпул пухса кĕртнĕ хыççăнхи вăхăта хăварса пысăк йăнăш тăваççĕ. Нумай районсем кĕрхи çĕртме тумалли пилĕккунлăх заданисене пурнăçа кĕртсе пыраймаççĕ. Кĕрхи çĕртме тăвас тĕлĕшпе уйрамах Улатăр, Элĕк, Йĕпреç, Канаш, Муркаш, Советски, Шăмăршă, Çĕмĕрле тата Тăвай районĕсенчи колхозсем юлса пыраççĕ. Çав районсенче кĕрхи çĕртме сухи тумалли плана пĕтĕмпе те 14—20 процент çеç тултарнă. Кувакино тата Пăрачкав районĕсенче вара кĕрхи çĕртме сухи тумалли плана 5—8 процент çеç тултарнă.

Канаш, Чкаловски, Комсомольски тата ытти хăшпĕр районсенчи райисполкомсемпе ВКП(б) райкомĕсем, колхоз правленийĕсемпе пĕрле, кашни колхозра кĕрхи çĕртме сухи тунă çĕрте мĕн чухлĕ лаша тата мĕн чухлĕ ĕне-выльăх ĕçлемеллине, тата çав ĕçре вĕсене мĕн плана тултаричченех урăх ĕçсене ямасăр ĕçлеттермеллине палăртса хуман. Çакăнпа пĕрлех ВКП(б) Обкомĕн тата çакăн пек даннăйсем те пур: чылай колхозсемпе совхозсенче кĕрхи çĕртме тунă чухне агротехника правилисене пурнăçа кĕртсе пымаççĕ: ăшăх сухалаççĕ, шăйрăлчаксем хăвараççĕ, пусă вĕççĕсемпе кĕтесĕсене сухаламасăр хăвараççĕ, выранти партипе совет тата çĕрĕç органĕсем çак фактсене курмасăр тăраççĕ, кĕрхи çĕртме сухин пахалăхне тĕрĕслессине организацилес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ.

ВКП(б) Обкомĕ çапла йышăнать:

1. 1946 çулта вăйлă тырпул туса илес ĕçре кашни колхозăн, совхозăн тата МТС-ăн кĕрхи çĕртме сухи тумалли государство планне вăхăтра тултарни партипе совет тата çĕрĕç органĕсен паха задачисенчен пĕри пулать тесе шутлас.

2. ВКП(б) райком секретарĕсемпе райисполком председателĕсене кĕрхи çĕртме сухи тăвас хăвартлăха ÿстерес тĕлĕшпе тата кашни колхоз, МТС тата совхоз кĕрхи çĕртме тумалли государство планне палăртнă вăхăтра тултармалла тăвас тĕлĕшпе халех тивĕçлĕ мерăсем йышăнма хушас. Çаксене пурнăçа кĕртес шутпа, çапла тума кирлĕ тесе палăртас:

а) МТС-ри кашни трактор бригадинчи тракторсен пĕр пайне тата колхозри уйхир ĕçĕн кашни бригадинче плугсен пĕр пайне кĕрхи çĕртме сухи тума уйăрса вĕсене халех ĕçе тытăнтармалла. Тырпул пухса кĕртес, авăн çапас тата государствăна тырă леçсе парас ĕçрен пушаннă пур тракторсемпе чĕрĕ туртăм вăйне те халех кĕрхи çĕртме сухи тунă çĕре ямалла. Кĕрхи çĕртме сухи тунă çĕрте ĕçлекен кашни трактористпа кашни сухаçăна Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обком бюровĕ 1945 çулхи августăн 22-мĕшĕнче «Чăваш АССР-чи колхозсенче 1945 çулта кĕрхи çĕртме сухи тăвасси çинчен» йышăннă постановленипе кăтартнă сезонри заданисене уйăрса памалла;

б) çав сезонри заданисем тăрăх кашни трактористпа кашни сухаçăна участоксем уйăрса памалла, çав участоксене хăçан сухаласа пĕтермеллине палăртса хумалла. Кĕрхи çĕртме сухи тумалли плана пĕтĕмпех тултариччен çав ĕçри тракторсемпе чĕрĕ туртăм вăйне, çавăн пекех тата трактористсемпе сухаçăсене те кирек епле урăх ĕçе те куçарма чарас;

в) кĕрхи çĕртме сухин пахалăхне çирĕп тĕрĕслесе пыма хушас. Уйхирĕç бригадисен бригадирĕсем сухаланă участоксене трактористсемпе колхозниксенчен йышăнмалла, колхоз председателĕсен вара çав участоксене уйхирĕç бригадисен бригадирĕсенчен йышăнмалла.

3. ВКП(б) райком секретарĕсемпе райисполком председателĕсене колхозсенче кĕрхи çĕртме сухи тăвас ĕç мĕнле пынине ларусенче пăхса тухма хушас. Колхозсенче кĕрхи çĕртме сухи тумалли плана тултарас тĕлĕшпе ĕçре пулăшу парса пымашкăн районри партипе совет активĕсене колхозсене яма хушас.

Пур трактористсемпе сухаçăсене те кĕрхи çĕртме сухи тунă çĕрте панă ĕç нормине тултарнăшăн тата ирттерсе тултарнăшăн премисем парасси çинчен ăнлантарса памалла.

4. ВКП(б) Обком бюровĕ партипе совет организацийĕсене кĕрхи çĕртме сухи тумалли плана вăхăтра тултарассишĕн тата ирттерсе тултарассишĕн колхозсем, трактор бригадисем хушшинче, колхозсемпе трактор бригадисене вара уйрăм колхозниксемпе трактористсем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн сарса яма кирлине палăртать.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн Секретарĕ И. ЧАРЫКОВ.

Совет гражданĕсене Швейцарирен илсе килесси

1945 çулхи июнь уйăхĕччен Швейцари влаçĕсем Швейцарие нимĕç тыткăнĕнчен тарнă совет çар çыннисене Тăван çĕршыва таврăнас тĕлĕшпе пĕрре те пулăшман çеç мар, вĕсем тата Швейцари çĕрне лекнĕ совет гражданĕсене начар условисенче, час-часах чăтма çук йывăр условисенче усранă. Çавна пула совет правительстви кăçалхи июнь уйăхĕнче ют çĕршыв çыннисене киле ярас тĕлĕшпе ĕçлекен совет органĕсене вĕсен аллинчи Швейцари гражданĕсене киле ямашкăн чарăнма хушнăччĕ, Швейцари влаçĕсем унта пурăнакан совет гражданĕсене лайăх условисем туса парса, вĕсене хăвăртрах тăван çĕршыва таврăнма тивĕçлĕ майсем тупни çинчен хыпарсем илнĕ хыççăн тин Швейцари гражданĕсене киле ямашкăн тепĕр хут тытăнма хушнăччĕ.

Çакăн хыççăн вара Швейцари гражданĕсене киле яма чарăннăччĕ. Анчах часах Швейцари правительстви совет гражданĕсене Швейцарирен киле ярас тĕлĕшпе ĕçлекен совет уполномоченнăйĕсене йышăнма хатĕрри çинчен тата вĕсене кирлĕ пулăшу пама пулни çинчен пĕлтернĕччĕ. Совет правительстви вара, Швейцари правительстви сĕннипе килĕшсе, Швейцарие совет гражданĕсене киле ярас тĕлĕшпе ĕçлекен комисси янăччĕ.

Хальхи вăхăтра çав комисси Совет правительствине çапла пĕлтернĕ: Швейцари влаçĕсем Швейцарири совет гражданĕсен пурнăçне лайăхлатас тата вĕсене тăван çĕршыва таврăнас тĕлĕшпе мерăсем йышăннă. Хальхи вăхăтра Швейцарире пулнă пур совет гражданĕсене те, 9.603 çынна, Тăван çĕршыва таврăннă. Çавăнпа та Совет правительстви çак октябрь уйăхĕн пĕрремĕш кунĕнче ют çĕршыв гражданĕсене киле ярас тĕлĕшпе ĕçлекен совет органĕсене вĕсен аллинчи Швейцари гражданĕсене киле ямашкăн тытăнма хушнă. (ТАСС).

ПРЕДПРИЯТИСЕНЧЕ АЧА ÇУРЧĔСЕМ УÇАССИ ÇИНЧЕН

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ предприятисенче ача çурчĕсем уçасси çинчен постановлени йышăннă. Совнарком йышăннă тăрăх, предприятисенче халĕ уçăлакан ача çурчĕсем те, унччenхисем те предприяти пăхăнса тăракан комиссариат аллинче пулмалла. Çавăнпа вĕсене укçа-тенкĕ те çав комиссариатсем парса тăмалла.

Çавăн пек ача çурчĕсене чи малтан çав предприятисенче ĕçленĕ, анчах Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче пĕтнĕ работниксен ачисем валли, çавăн пекех тата çав предприятисенчи пулăшу пама тивĕçлĕ нумай ачаллă семьесен ачисене валли уçмалла. (ТАСС).

Пирĕн республикăра Çĕнтерÿ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăрту пуçарса янă Хĕрлĕ Ялавлă Вăрнар районĕнчи колхозсем хăйсен малтанхи тивĕçне—государствăна тырă памалли плана ăнăçлă пурнăçларĕç. Кашни районăн вăрнарсемпе танлашассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле!

Вăрнар районĕ государствăна тырă парса татнă

ВĂРНАР, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТЕЛЕГРАФПА). Районри колхозсем октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă памалли пур тĕрлĕ обязательствăсене те тултарчĕç. Халĕ государствăна планран ирттерсе тырă параççĕ.

**ВКП(б) РАЙКОМĔН СЕКРЕТАРĔ Я. ПЕТРОВ.
РАЙИСПОЛКОМ ПРЕДСЕДАТЕЛĔ П. ОСИПОВ.
НАРКОМЗАГАН РАЙОНРИ УПОЛНОМОЧЕННĂЙĔ ИГОРЕВ.**

Хĕрлĕ Çар фондне тырă параççĕ

ВĂРНАР, октябрĕн 2-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем государствăна обязательство тăрăх тырă памалли плана, МТС ĕçленĕшĕн паракан натуроплатăна, вăрлăхлăх илнĕ ссудăна тата Хĕрлĕ Çар фондне тырă памалли плана тултарнă хыççăн, планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне тырă пама тытăннă. «Первое мая» колхоз 1800 пăт, Сталин ячĕпе тăракан колхоз 2400 пăт, Чапаев ячĕпе тăракан колхоз 240 пăт тата ытти колхозсем те çĕршер пăт тырă панă. Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе тырă парасси ытти колхозсенче те ăнăçлă пырать.

* * *

СОВЕТСКОЕ, октябрĕн 2-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри 30 колхоз ытла государствăна тырă памалли плана тултарнă. Халĕ колхозсем планран ирттерсе тырă параççĕ.

Районра çак патриотизмла ĕçе Тури Ачакри Буденный ячĕпе тăракан колхоз пуçарса ячĕ. Ку колхоз сентябрĕн 8-мĕшĕнче тырă вырса пĕтерсе, государствăна тырă пама тытăнчĕ, сентябрĕн 23-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă памалли плана тултарчĕ.

Нумаях пулмасть çак колхозра колхозниксен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура планран ирттерсе государствăна тырă парасси çинчен сÿтсе-яврĕç. Пухура Отечественнăй вăрçă инваличчĕн арăмĕ Анисия Громова юлташ çапла тухса каларĕ:

— Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче эпир колхозра ĕçленине пула, тулли пурнăçпа пурăнтăмăр. Манăн упăшка Хĕрлĕ Çарта тăшмана хирĕç çапăçрĕ, унтан аманса суранланса килчĕ. Апла пулин те эпĕ 6 ачана тăрантма, тумлантарма пултартăм. Вăрçă пĕтрĕ, лăпкă пурнăç пуçланчĕ. Хамăр Тăван çĕршыв хăватне ÿстерессишĕн эпир вăрçă вăхăтĕнче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕмĕр, халĕ те çавăн пекех ĕçлĕпĕр. Эпĕ Хĕрлĕ Çар фондне тырă ытларах пама сĕнетĕп,—терĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем пĕр кăмăллă пулса планран ирттерсе государствăна тырă пама йышăннă тата районри ытти колхозсене те вĕсен примерĕпе тырă пама чĕннĕ.

Буденный ячĕпе тăракан колхоз паянхи кун тĕлне 850 пăт тырă леçсе панă. Вĕсен чĕнĕвне ырласа ытти колхозсенче те планран ирттерсе тырă пама тытăннă. Районĕпе 5.000 пăт ытла тырă панă.

Н. ПУШКИН.

Çĕрулми кăларса государствăна параççĕ

ТĂВАЙ Тенеялĕнчи «Новый путь» колхоз 21 гектар çĕрулми кăларса пĕтерчĕ тата государствăна 70 центнер парса плана çурри ытла тултарчĕ. Ямбулатри «Звезда» 20 гектар çĕрулми кăларса государствăна та парса татрĕ. Çĕрулми кăларас ĕç «Красный Октябрь», «Красная Чувашия» колхозсенче те лайăх пырать. «Трудовой путь» колхоз паян-ыран кăларса пĕтерет.

Енĕш Нăрвашри «Красная Чувашия» колхоз 0,5 гектар кишĕр, 3 гектар купăста, 1 гектар помидор тата ытти пахчаçимĕç те пухса илчĕ. Государствăна 120 центнер пахчаçимĕç парса хăйĕн обязательствине тултарчĕ.

Çăлпуçĕнчи Киров ячĕпе тăракан, Лачкассинчи «Звезда», Чÿкçырминчи «Коммунар», Тăрмăшри Ленин ячĕпе тăракан колхозсенче çĕрулми кăларасси тата пахчаçимĕçсем пухса кĕртесси ытла та япăх пырать. Çак колхозсенче ялти пушă çынсене ĕçе явăçтарман.

В. ИЛЬИН.

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ ТЫРПУЛ ПУХСА КĔРТЕС ĔÇ ОКТЯБРĔН 1-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА (Процентпа)

Районсем	Капан хывнă	Авăн çапнă	Çĕрулми кăларнă	Вăрлăхлăх курăк пухнă
Улатăр	81,5	51,8	0,9	29,3
Элĕк	87,3	58,3	26,1	64,3
Вăрнар	92,7	68,1	43,0	100,0
Йĕпреç	81,8	63,9	12,2	28,7
Ишлей	81,4	67,1	45,4	100,0
Калинино	94,9	70,0	48,4	66,9
Канаш	76,0	61,0	16,7	25,0
Куславкка	79,1	66,3	3,5	88,5
Комсомольски	80,3	55,5	34,8	44,6
Красноармейски	92,3	65,4	51,8	55,9
Хĕрлĕ Чутай	82,7	58,2	49,6	80,6
Кувакино	66,4	55,1	2,4	60,7
Сĕнтĕрвăрри	80,8	61,2	24,0	26,7
Муркаш	73,4	62,2	15,5	72,6
Октябрьски	91,9	73,0	25,4	29,0
Первомайски	89,0	62,7	50,1	60,6
Пăрачкав	73,4	52,4	5,1	17,5
Советски	85,5	55,0	33,1	49,5
Сĕнтĕр	79,0	61,8	33,2	81,7
Вăрмар	82,7	61,7	37,6	47,4
Çĕрпÿ	87,6	67,2	58,2	100,0
Шупашкар	87,1	73,7	29,8	91,5
Чкаловски	91,5	53,9	49,5	70,0
Чурачăк	87,4	63,9	49,4	100,0
Шăмăршă	95,0	75,2	74,7	100,0
Шăхасан	83,9	58,3	31,4	70,2
Çĕмĕрле	75,5	53,1	9,3	27,5
Етĕрне	98,5	52,4	50,9	89,3
Елчĕк	91,4	57,4	72,9	100,0
Тăвай	82,1	65,8	19,5	32,8

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ КĔРХИ ÇĔРТМЕ ТĂВАС ĔÇ ОКТЯБРĔН 1-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА (Процентпа)

РАЙОНСЕМ	Кĕрхи çĕртме тунă
Çĕрпÿ	60,1
Красноармейски	45,8
Чурачăк	45,6
Шупашкар	41,1
Вăрмар	41,0
Сĕнтĕр	40,8
Октябрьски	40,3
Етĕрне	40,0
Сĕнтĕрвăрри	39,6
Вăрнар	38,8
Куславкка	37,3
Елчĕк	36,1
Ишлей	35,4
Шăхасан	33,1
Калинино	31,4
Чкаловски	29,9
Элĕк	23,8
Первомайски	23,6
Канаш	21,7
Муркаш	20,5
Советски	19,3
Шăмăршă	18,2
Хĕрлĕ Чутай	18,1
Тăвай	17,6
Комсомольски	17,5
Йĕпреç	16,3
Улатăр	15,0
Çĕмĕрле	14,1
Пăрачкав	8,3
Кувакино	5,1

Тырпула кĕске вăхăтра пухса кĕртрĕмĕр

Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕк ял Совечĕ «Журавлевка» тата Ленин ячĕпе тăракан колхозсем кĕреççĕ. Ленин ячĕпе тăракан колхоз—районри чи пысăк колхозсенчен пĕри. Унта пурĕ 10 бригада. Кашни бригадăрах пĕрер жнейкăпа кунĕн çĕрĕн ĕçленĕ, уйсăр пуçне çурласемпе те вырнă. Çапла ĕçлесе икĕ колхозĕ те сентябрĕн 13-мĕшĕ тĕлне тырă вырса пĕтерчĕç. «Журавлевка» колхоз сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне капан хывса тата авăн çапса та пĕтерчĕ. Çак колхоз районра юлса пыракан Аслă Таяпари колхоза пулăшас тесе, 40 гектар тырă вырса пачĕ. «Журавлевка» колхоз государствăна тырă памалли плана та тултарчĕ. Ленин ячĕпе тăракан колхоз çитес пилĕк кун хушшинче государствăна тырă парса татассишĕн кĕрешет. Çак колхозра коммунистсем кăна 23 çын шутланаççĕ, вĕсем тырпул пухса кĕртес ĕçре ялан нормăна ытлашшипех тултараççĕ тата агитацие массăллă ĕçе те лайăх туса пыраççĕ.

Н. ВИССАРИОНОВ,
Аслă Елчĕк ял Совет председателĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

ОКТЯБРЬ УЯВĔ УМĔНХИ СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТУРА ФИНАНС ПЛАННЕ ТУЛТАРАС ТĔЛĔШПЕ МАЛА ТУХАКАН РАЙОНСЕНЕ ПРЕМИ ПАРАССИ ÇИНЧЕН

Чăваш АССР-ĕнчи финанс работникĕсем хушшинче 1945 çулхи IV-мĕш кварталти финанс планне срокчен тултарас тĕлĕшпе Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту пуçланнă май, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ районри финанс планне тултарас тĕлĕшпе мала тухнă тата социализмлă ăмăрту условийĕсене пурнăçа кĕртнĕ финанс работникĕсене премилемешкĕн çакăн пек премисем уйăрнă:

10.000 тенкĕлĕх пĕр преми;
7.500 тенкĕлĕх икĕ преми;
5.000 тенкĕлĕх виçĕ преми.

РЕСПУБЛИКĂРИ ПУРĂНМАЛЛИ ÇУРТЙĔР, КОММУНАЛЬНĂЙ ХУÇАЛĂХ ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕН АВГУСТ УЙĂХĔНЧИ СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТĂВĔН ИТОГĔСЕМ ÇИНЧЕН

Чăваш АССР Совнаркомĕ республикăри пурăнмалли çуртйĕр тата коммунальнăй хуçалăх предприятийĕсен 1945 çулхи август уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, çаксем мала тухнине палăртнă:

Шупашкарти мунча (директорĕ Костина юлташ)—август уйăхĕнчи плана 103 процент, тупăш илмелли плана 104 процент тултарнă. Шупашкарти мунчана Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне тата социализмлă ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 5.000 тенкĕ укçа пама йышăннă.

Çĕрпÿри хула çуртйĕр управленийĕ (начальникĕ Беспалов юлташ) — капитальнăй ремонт тăвас енĕпе август уйăхĕнчи плана 170,2 процент, 8 уйăхри плана 104 процент тултарнă. Çĕрпÿри хула çуртйĕр управленине социализмлă ăмăртура палăрнă работниксене премилеме пĕрремĕш преми 3000 тенкĕ укçа пама йышăннă.

Канашри колхозниксен çурчĕ (заведующийĕ Петров юлташ)—уйăхри плана 120 процент, тупăш илмелли плана 115,8 процент тултарнă. Канашри колхозниксен çуртне социализмлă ăмăртура палăрнă работниксене премилеме иккĕмĕш преми 2000 тенкĕ укçа пама йышăннă.

Август уйăхĕнче Шупашкарти хула канализацийĕ, Шупашкарти парикмахерски лайăх ĕçленине палăртнă.

ПРОФСОЮЗ ОРГАНИЗАЦИЙĔСЕМ ХĔРЛĔ ÇАРТАН ТАВРĂННĂ ВОИНСЕНЕ ПУЛĂШАССИ ÇИНЧЕН

ВЦСПС секретариачĕ Хĕрлĕ Çартан киле таврăннă воинсене килти пурнăçра пулăшасси çинчен тата вĕсене ĕçе вырнаçтарасси çинчен сÿтсе-явнă. Çав ыйтупа çаксем доклад туса панă: Электричество промышленность Халăх Комиссариачĕн представителĕ, электричество машинисем тăвакан промышленноçра ĕçлекен рабочисен профсоюзĕн Центральнăй Комитечĕн представителĕ тата вăйлă мар токлă электричество промышленноçĕнче ĕçлекен рабочисен профсоюзĕн Центральнăй Комитечĕн представителĕ.

ВЦСПС секретариачĕ электричество машинисем хатĕрлекен хăшпĕр предприятисенче фронтран таврăннă воинсене йышăнас тата вĕсене ĕçе вырнаçтарас тĕлĕшпе сахал ĕçленине палăртнă. ВЦСПС секретариачĕ фабрикăпа завод комитечĕсен председателĕсене пурне те Хĕрлĕ Çартан таврăннă кашни воинпа калаçса, вĕсене мĕн кирлине пĕлме хушнă. Хĕрлĕ Çартан таврăннă кашни воина пурăнма тата производствăра ĕçлеме тивĕçлĕ условисем туса панине çирĕп контроллесе тăмалла. Хĕрлĕ Çартан таврăннă воинсене пурне те хăйсен квалификацине кура ĕç тупма пулăшмалла. Нимĕнле специальноçа та пĕлменнисене курссенче тата предприяти цехĕсенче кашнине хăйне уйрăм тата бригадăсем туса производствăна вĕрентес ĕçе организацилемелле.

Профсоюз организацийĕсен октябрь уйăхĕнче çак ĕçсене тутарттармалла: Хĕрлĕ Çартан таврăннă пĕччен воинсем валли общежитисене юсаса, унта мĕн кирлине пурне те лартса тухмалла, çемьеллĕ воинсен хваттерĕсене юсаса пĕтермелле. Çав хваттерсенче сĕтел-пукансем тата ытти кирлĕ япаласем те лартмалла, вутă хатĕрлесе памалла.

ВЦСПС секретариачĕ фронтран килнĕ воинсене тата вĕсен çемьисене кирлĕ япаласем туянма пулăшма хушать, вĕсене чи малтан промышленность таварĕсем тата подсобнăй хуçалăхсенче туса илнĕ апат-çимĕç памалла. Кирлисене кану çурчĕсене кайма путевкăсем памалла, врачсен курорт комиссийĕсем каланă тăрăх санаторисемпе курортсене ямалла.

ВЦСПС секретариачĕ çуртйĕр хуçалăхĕнче ĕçлекен рабочисен профсоюзĕн Центральнăй Комитетне ĕççынни депутачĕсен Совечĕсен исполкомĕсен çурчĕсенче Хĕрлĕ Çартан таврăнакансемпе вĕсен çемьисем валли хваттерсем мĕнле хатĕрленине контроллеме хушнă. Профсоюзсен Центральнăй Комитечĕсене тата фабрикăпа завод комитечĕсене Хĕрлĕ Çартан таврăннă воинсене культура тĕлĕшпе пулăшса тăма хушнă, вĕсен лекцисем, калаçусем туса ирттермелле, хаçатсем тата литература парса тăмалла.

ВЦСПС секретариачĕ пур профсоюзсен Центральнăй Комитечĕсене те Хĕрлĕ Çартан таврăнакан воинсене йышăнас тата вĕсене ĕçе вырнаçтарас тĕлĕшпе мĕнле ĕçсем туни çинчен 1945 çулхи ноябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне тата 1946 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне çырса пама хушнă.

Пĕтĕм Российĕри çăмăл промышленность работникĕсен канашлăвĕ хупăннă

РСФСР-ăн çăмăл промышленноçĕнчи ĕçе ертсе пыракан работниксен канашлăвĕ виçĕ кун пынă.

РСФСР Çăмăл промышленность Халăх Комиссарĕ Щеголев юлташ доклад тунă. Унăн докладне сÿтсе-явнă чухне крайсенчи, облаçсенчи, хуласенчи çăмăл промышленность управленийĕсен ертсе пыракан работникĕсем туха-туха каланă. Вĕсем хăйсен ĕçри опычĕ çинчен каласа кăтартнă, куллен кирлĕ таварсене ытларах туса кăларас тĕлĕшпе паха сĕнÿсем чылай панă.

Канашлу ĕçне РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн Заместителĕ Н. Е. Чесноков юлташ хутшăннă. Вăл хăйĕн сăмахĕнче çакна палăртса панă: Çăмăл промышленность Халăх Комиссариачĕн пĕтĕм системинче ĕçлекен работниксен задачи вăл—çак çитес вăхăтрах граждансем валли куллен кирлĕ таварсене ытларах туса кăларма пуçласси, çав таварсен пахалăхне лайăхлатасси тата вĕсен ассортиментне йышлăлатасси.

Канашлура СССР Çăмăл промышленность Халăх Комиссарĕ С. Г. Лукин юлташ сăмах тухса каланă. Вăл хăйĕн сăмахĕнче куллен кирлĕ таварсем туса кăлармашкăн вырăнсенче чĕртавар туса хатĕрлес ĕçе аслăлатма кирлине тата пысăк квалификациллĕ кадрсем хăвăртрах хатĕрлеме кирлине кăтартса панă.

Канашлăва пухăннă работниксем, çав тери хавасланса, Сталин юлташа салам янă. (ТАСС).

Шкул инспекторĕсем

РСФСР Совнаркомĕ шкул инспекторĕсем çинчен калакан положение çирĕплетнĕ. Шкул инспекторĕсем РСФСР Наркомпросĕн системине кĕрекен шкулсенче мĕнле вĕрентнине тата воспитани панине государство енчен контроллесе тăраççĕ. Вĕсен партипе правительствăн постановленийĕсене тата Наркомпросăн приказĕсене шкулсемпе çутĕç пайĕсем мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине тĕрĕслемелле.

Шкул инспекторĕсем пулма чи лайăх учительсене, шкул заведующийĕсемпе директорĕсене лартаççĕ. Вĕсем аслă педагогика шкулĕнчен е университетран вĕренсе тухнă пулмалла тата педагогика тĕлĕшĕнчен ертсе пырас ĕçре çакăн чухлĕ ĕçленĕ пулмалла: районсемпе хуласенчи çутĕç пайĕсен инспекторĕсем—5 çултан кая мар, облаçсемпе крайсенчи çутĕç пайĕсен тата автономиллĕ республикăсенчи Наркомпроссен инспекторĕсем — çичĕ çултан кая мар, РСФСР Наркомпросĕн Кĕçĕн шкулпа вăтам шкул управленийĕн инспекторĕсем—10 çултан кая мар ĕçленĕ пулмалла. (ТАСС).

И. П. ПАВЛОВĂН ВИЛĔ ТĂПРИ ÇИНЕ ЧЕЧЕК ÇЫХХИСЕМ ХУНИ

ЛЕНИНГРАД, сентябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Паян, аслă вырăс физиологĕ Иван Петрович Павлов академик çурални 96 çул тултарнă кун, Ленинградри физиологсен пысăк ушкăнĕ ученăйăн Волков масарĕ çинчи вилĕ тăпри патне пынă. Вăл ушкăна СССР Наука академийĕн вице-президенчĕ Л. А. Орбели ертсе пынă.

Вилĕ тăпри çине Наука академийĕн физиологи институтĕнчи, Пĕтĕм Союзри экспериментлă медицина институтĕнчи тата ытти наука учрежденийĕсенчи работниксен ячĕпе чечек çыххисем хунă.

Хĕрлĕ Хĕреспе Хĕрлĕ Çуруйăх Обществисен Союзĕн Исполкомĕнчен

Нумайĕшĕ ыйтнă пирки çапла ăнлантарса паратпăр:

1. Совет Союзĕнчи Хĕрлĕ Хĕреспе Хĕрлĕ Çуруйăх Обществисен Союзĕн Исполкомĕ çумĕнчи Справкăсем паракан тĕп бюро тăшман çарĕсем хăваласа кайнă, ялан пурăннă вырăнтан вăрçă пирки куçса кайнă тата вăрçă вăхăтĕнче пĕр хыпарсăр çухалнă гражданла çынсене шыраса парать.

2. Справкăсем паракан тĕп бюрон адресĕ çапла: гор. Москва 127, Климентовский переулок, дом № 1. Малта асăннă çынсене шырама ыйтса çырнă заявленисене çав адреспа ямалла.

Финанс планне тултарассишĕн Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ярар

А. М. МАТВЕЕВ
Чăваш АССР Совнарком Председателĕ

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ярса, Çĕрпÿпе Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи финанс работникĕсемпе ял Совет председателĕсем хăйсем çине 1945-мĕш çулхи финанс планĕпе бюджетăн доход пайне срокчĕнех тултарма обязательство илчĕç. Вĕсем республикăри мĕнпур финанс работникĕсене, ял Совет председателĕсене, ялсенчи активпа комсомолецсене хăйсенчен пример илсе, Финанс планне тултарас тĕлĕшпе ĕçлеме чĕнчĕç.

Республикăри райсовет председателĕсемпе районри финанс пайĕсен работникĕсем, çавăн пекех ял Совет руководителĕсемпе ялти актив Çĕрпÿпе Сĕнтĕрвăрри районĕсен лайăх пуçарăвне йышăнса, Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва анлăн хутшăнасса, çапла вара 1945-мĕш çулхи бюджетăн доход пайĕпе финанс планне пĕтĕмĕшпех тултарасса шанса тăратпăр.

Паянхи кун тĕлне илсен, республика финанс планне тултарас тĕлĕшпе лайăх ĕçлет теме çук-ха. Сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне III-мĕш кварталти финанс планне республикăра пурĕ те 56,2 процент, вăл шутран: вăрçă вăхăтĕнчи налог тăрăх—47,4 процент, ялхуçалăх налогĕ тăрăх—26,7 процент, Госстрах тÿлевĕсем тăрăх—79 процент кăна тултарнă. Çавнашкалах Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемĕ тăрăх та планпа палăртнă чухлĕ укçа пухайман-ха. Финанс ĕçĕ çакнашкал япăх пыни нумай районсен руководителĕсене, чи малтанах райсовет председателĕсемпе районсенчи финанс пайĕсен заведующийĕсене финанс планне тултарас тĕлĕшпе малашне тăрăшарах ĕçлеме, çак тĕлĕшпе çитес вăхăтрах тивĕçлĕ мерăсем йышăнма кирлине кăтартса парать. Çапла пулин те республикăра финанс енĕпе юлса пыракан районсен руководителĕсем ĕçе юсас пирки нимех те тумаççĕ-ха.

Райсовет председателĕсемпе финанс пайĕсен заведующийĕсем кулленех тăрăшса ĕçлекен районсенче финанс планне уйăхран уйăха, кварталтан квартала тултарса пыраççĕ. Çакăн пек районсен шутне Сĕнтĕрвăрри, Куславкка, Çĕрпÿ, Октябрьски, Вăрмар, Муркаш районĕсене кĕртмелле. Сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне укçа-тенкĕ пухмалли III-мĕш квартал планне Çĕрпÿ районĕ—112,8 процент, Сĕнтĕрвăрри районĕ—90,6 процент, Вăрмар районĕ—81 процент, Муркаш районĕ—80,8 процент, Куславкка районĕ — 73 процент, Октябрьски район—71 процент тултарнă. Квартал пĕтнĕ тĕле вĕсенчен хăшпĕрисем вара плана ирттерсе те тултарнă. Республикăри районсен пур руководителĕсем те финанс планне тултарас тĕлĕшпе çак асăннă районсенчи пек ĕçлесен, паллах, республикăра финанс планне тултарас ĕç чылай лайăхрах пулнă пулĕччĕ.

Анчах республикăра финанс планне кварталтан квартала тултарса пыман, çакна пула вара учительсемпе медицина тата ытти работниксене вăхăтра ĕç укçи тÿлемен районсем те пур-ха. Финанс енĕпе кая юлса пыракан районсем культура мероприятийĕсене кирлĕ таран укçа-тенкĕ уйăрса параймаççĕ. Çакнашкал районсен шутне Сĕмĕрле, Хĕрлĕ Чутай, Кувакино, Комсомольски, Чкаловски, Советски, Пăрачкав, Улатăр, Первомайски районсене кĕртмелле. Çак районсем 1945 çулхи финанс планне пĕр кварталта та тултарман. Сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне асăннă районсем III-мĕш квартал планне пурĕ те 15—39 процент кăна тултарнă.

Асăннă районсенчен укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе уйрăмах Сĕмĕрле районĕ питĕ япăх ĕçлет. Кунта укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе I-мĕш квартал планне—86,4 процент, II-мĕш квартал планне—60,9 процент, III-мĕш квартал планне (сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне)—15,3 процент çеç тултарнă. Финанс планне тултарас тĕлĕшпе çакăн пек япăх ĕçленине пула, кунта 1945 çулта тума палăртнă чылай мероприятисем пурнăçа кĕреймесĕрех юлаççĕ. Районра учительсене, медицина тата ытти работниксене кашни уйăхрах ĕç укçи кая юлса тÿлеççĕ. Кунта уйрăмах ял Совет бюджечĕсен доход пайĕсене тултарасси япăх пырать. Çапла, 1945 çулхи малтанхи çур çулра ял Совет бюджечĕсен доход пайне пурĕ те 36 процент кăна тултарнă. Анчах çапах та Сĕмĕрле райсовет исполкомĕн председателĕ Подклетнов юлташ тата финанс пайĕн заведующийĕ Мальцев юлташ финанс плане тултарас тĕлĕшпе тăрăшни курăнмасть, вĕсем государствăн çак паха ĕçне кулленех ертсе пымаççĕ, ялсемпе колхозсенчи актива мобилизацилемеççĕ, налог агенчĕсемпе ял Совет председателĕсем финанс планне тултарассишĕн мĕнле ĕçленине тĕрĕслемеççĕ. Районри хăйсен парăмĕсене юриех тÿлемесĕр тăракан çынсем пирки те нимĕнле мерăсем те йышăнмаççĕ.

Сĕмĕрле районĕн руководителĕсем финанс планне мĕнле тултарса пынине кулленех тĕрĕслесе пынă пулсан, халăх хушшинче массăллă ăнлантарулла ĕçе анлăн сарса янă пулсан, хăйсен парăмĕсене юриех тÿлемесĕр тăракан çынсем пирки тивĕçлĕ мерăсем йышăннă пулсан, паллах ĕнтĕ, район финанс енĕпе халĕхи пек кая юлман пулĕччĕ, унăн çитменлĕхĕсем те сахалрах пулнă пулĕччĕç. Тăрăшса ĕçленĕ пулсан, вĕсем районри ача çурчĕпе сывлăх учрежденийĕсене те укçа-тенкĕ вăхăтра панă, районри работниксене те ĕç укçи вăхăтра тÿленĕ пулĕччĕç.

Хăшпĕр районсенче укçа-тенкĕ пухас план мĕншĕн кварталтан квартала тулмасть-ха? Çакна районсен руководителĕсем укçа-тенкĕ пухас ĕç çине çителĕксĕр пăхнипе, вĕсем финанс органĕсен ĕçне кулленех ертсе пыманнипе, финанс агенчĕсемпе, ялсемпе колхозсенчи активпа тивĕçлĕ ĕçлеменнипе тата вĕсен ĕçне пĕлсе организацилеменнипе, çавнашкалах ялсенчи комсомолпа парти организацийĕсене çак ĕçе мобилизацилеменнипе ăнлантарса пама пулать.

Чылай районсенче финанс агенчĕсем хăйсем тĕллĕнех ĕçлесе пыраççĕ, вĕсене ĕçре никам та ертсе, пулăшса пымасть. Райсовет председателĕсем финанс агенчĕсене пухса канашлусемпе калаçусем туса ирттермеççĕ. Çавăн пекех канашлусене хăшпĕр çĕрте пухаççĕ пулсан та, кварталта пĕрер хут çеç ячĕшĕн туса ирттереççĕ. Финанс ĕçне тивĕçлĕ çынсене уйăрса лартас ĕç çине, уйрăмах финанс агенчĕсене пуçаруллă çынсем уйăрса лартас ĕç çине кирлĕ пек пăхмаççĕ, çакна пула ĕнтĕ пирĕн финанс агенчĕсем хушшинче государствăн çав пысăк та паха ĕçне тума пултарайман çынсем те пулаççĕ.

Укçа-тенкĕ пухас плана тултарманнине район руководителĕсем финанс ĕçне тивĕçлĕ хакламаннипе ăнлантарса пама пулать. Хăшпĕр çĕрте районри финанс работникĕсене, пĕчĕк çынтан пуçласа пысăк работнике çитиех, урăх ĕçсем тума мобилизацилеççĕ, çапла вара финанс ĕçĕ питех те япăхса каять. Паллах, финанс работникĕсем çине çапла пăхнине пула нумай районсем финанс планне тултараймаççĕ.

Тĕлĕнмелле пулсан та, çакнашкал факта та кăтартса хăвармалла: хăшпĕр районсен, уйрăмах финанс енĕпе юлса пыракан районсен исполком председателĕсем, уйăхри финанс плане мĕнле тултарнине 10—15 кун иртнĕ хыççăн тин пĕлеççĕ.

Исполком председателĕсемпе финанс пайĕсен заведующийĕсем хăйсен районĕнчи ял Совечĕсем финанс планне мĕнле тултарса пынине уйăхра пĕр-икĕ хут çеç тĕрĕслеççĕ пулсан, районсем финанс енĕпе питех те юлса пынинчен нимĕн тĕлĕнмелли те çук.

Финанс планне тултарас тĕлĕшпе çакăн пек çиелтен кăна ĕçлени пĕр районта та пулмалла мар. Çапла ĕçлени вăл районта финанс планне тултарас енĕпе кварталтан квартала кая хăварса пырать. Финанс планне тăтăшах тултарса пырас тесен, çак ĕçе тĕпрен лайăхлатмалла. Исполком председателĕсемпе районри финанс пайĕсен заведующийĕсен хăйсен районĕнче çакăн пек йĕрке тăвас пулать: кашни ял Совечĕпе кашни налог агенчĕ мĕн чухлĕ укçа пухнине кулленех тĕрĕслемелле, финанс планне тултарайман председательсемпе агентсене конкретлăй пулăшу памалла.

Укçа-тенкĕ пухас плана кварталтан квартала тултарса пырас тесен, пирĕн çÿлте асăннă çитменлĕхсене пĕтерсе, хĕрÿллĕ ĕçе тытăнмалла.

Финанс планне тултармалли условисем пур районсенче те пур. Çакна Çĕрпÿ районĕн ĕçех аван кăтартса парать. Ку район укçа-тенкĕ пухмалли плана кашни уйăхра, кашни кварталта ытлашшипех тултарса пырать. Вăл I-мĕш квартал планне—108 процент, II-мĕш квартал планне—121,3 процент, III-мĕш квартал планне (сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне) — 112,8 процент тултарнă. Кунта финанс планне тултарассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ, финанс халăх хуçалăхĕнче мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине тĕрĕс ăнланса илнĕ.

Çĕрпÿ районĕ финанс планне çакнашкал ăнăçлăн тултарса пынине районри финанс пайĕн заведующийĕ Петров юлташпа райсовет председателĕ Хабаров юлташ кулленех тăрăшса ĕçленипе ăнлантарса парас пулать. Вĕсем кашни вунă кун хушшинчех финанс агенчĕсемпе ял Совет председателĕсене пухса канашлу туса ирттереççĕ.

Çав канашлусенче хăшпĕр ял Советсемпе финанс агенчĕсем ĕçре мĕншĕн юлса пынине палăртса, çитменлĕхсене пĕтерес майпа конкретлăй мерăсем йышăнаççĕ. Кунсăр пуçне, канашлусенче кашни ял Совет председателĕпе финанс агенчĕ иртнĕ вунă кун хушшинче хăйсем мĕнле ĕçлени çинчен, малашне мĕн-мĕн тума палăртни çинчен кĕскен каласа параççĕ. Кунта районри финанс агенчĕсем хушшинче социализмла ăмăрту та анлăн сарса янă. Социализмлă ăмăртура хăйсем çине илнĕ обязательствăсене ял Совет председателĕсемпе финанс агенчĕсем мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине тăтăшах тĕрĕслесе пыраççĕ.

Çĕрпÿ районенче финанс планне тултарас тĕлĕшпе чи малта пыракан ял Советне пама райсоветăн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне тунă. Çак ялава социализмлă ăмăрту обязательствисене ял Совечĕсем мĕнле тултарнине тĕрĕсленĕ хыççăн мала тухнă ял Советне параççĕ. Кунсăр пуçне, райсовет Исполкомĕ вăхăтран вăхăта хăйĕн ларăвĕсенче уйрăм ял Совет председателĕсемпе финанс агенчĕсен отчечĕсене итлет. Районра кашни финанс агенчĕпе ял Совет председателĕ финанс пайĕнчен кашни вунă кун хушшинче задани илсе тăрать.

Ĕçе çакнашкал организацилени финанс агенчĕсемпе ял Совет председателĕсен ĕçне палăрмаллах лайăхлатать. Çапла ĕçлени вăл районри финанс планне кашни уйăхра ытлашшипех тултарса пыма май парать. Тепĕр енчен, çакă вăл кашни финанс агенчĕпе ял Совет председательне ĕçре пулăшу парса пырать. Çавăнпа та ĕнтĕ кашни районăн Çĕрпÿ районĕнчен пример илсе, унти работниксем пек тăрăшса ĕçлемелле.

Финанс агенчĕ финанс ĕçĕнчи тĕп фигура пулса тăрать. Çавăнпа финанс планне тултарасси те вăл тăрăшса ĕçленинчен нумай килет. Çакна нумай тĕслĕхсенчен курма пулать.

Акă, Çĕрпÿ районĕнчи Патăръел ял Советĕнчи финанс агенчĕ Т. И. Иванова юлташ III-мĕш кварталти финанс планне сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне 172,5 процент тултарнă. Иванова юлташпа ял Совет председателĕ В. И. Иванов юлташ ĕçре пĕр-пĕрнипе килĕштерсе ĕçлеççĕ. Хăйсен ĕçĕнче вĕсем ялти активпа тата интеллигенци вăйĕпе анлăн усă кураççĕ. Вĕсем ялан учительсемпе, комсомолецсемпе, ял Совет депутачĕсемпе таччăн çыхăнса ĕçлеççĕ. Финанс агенчĕ Иванова юлташ хăйсен парăмĕсене вăхăтра тÿлемен çынсем патне пырса вĕсем парăма мĕншĕн тÿлеменнипе интереслеиет, вĕсем хушшинче массăллă ăнлантару ĕçне анлăн туса пырать. Иванова юлташ час-часах районри финанс пайĕн заведующийĕнчен кăтартусем пама ыйтать. Çавăн пекех Кăшаркассинче те (ял Совет председателĕ Ефимов юлташ) III-мĕш кварталти финанс планне сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне 168,8 процент тултарнă. Кунта уйрăмăнах финанс агенчĕ Н. Кудрявцева юлташ тăрăшса ĕçленине палăртас пулать. Елаш ял Советĕнчи финанс агенчĕ Е. Кондратьева юлташ лайăх ĕçленине пула III-мĕш кварталти финанс планне сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне 163 процент тултарнă.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Ольтикасси ял Советĕнчи финанс агенчĕ П. Егорова юлташ та III-мĕш кварталти финанс планне сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне ял Совечĕ тăрăх 193 процент тултарнă. Çавăн пекех ку районти Шуршăл ял Советĕнчи финанс агенчĕ В. П. Охотникова, Макаç ял Советĕнчи финанс агенчĕ М. М. Михайлова, Ăстакасси ял Советĕнчи финанс агенчĕ Е. Н. Назарова юлташсем тăрăшса ĕçлеççĕ, вĕсем те хăйсен финанс планĕсене ытлашшипех тултарнă.

Çакнашкал тĕслĕхсене татах та нумай илсе кăтартма пулать. Çак тĕслĕхсем ĕнтĕ пурте налог агенчĕсене пĕлсе уйăрса лартнине, вĕсене ĕçре кулленех ертсе пынине кăтартса параççĕ.

Районсен руководителĕсем, чи малтанах ВКП(б) райком секретарĕсемпе райсовет Исполкомĕсен председателĕсем, финанс планне тултарас тĕлĕшпе октябрь уйăхĕн малтанхи кунĕсенчен тытăнсах тăрăшса ĕçлесе пырсан, Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртура финанс планне тултарас енĕпе илнĕ обязательствăна ăнăçлăнах тултарма пулать.

ВКП(б) райком секретарĕсемпе райисполком председателĕсен çак пысăк ĕçе финанс работникĕсене, ялсемпе колхозсенчи актива, комсомолецсемпе коммунистсене мобилизацилемелле. Çĕрпÿпе Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи пек, кашни районрах финанс работникĕсемпе ял Совет председателĕсен канашлăвĕсене туса ирттермелле. Çак канашлусенче финанс планне тултарас тĕлĕшпе Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса тăтăклă обязательствăсем илмелле.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ярса, халăх хушшинче массăллă ăнлантару ĕçне вăйлатса, ялсемпе колхозсенчи пĕтĕм общественноса мобилизацилесе 1945-мĕш çулти финанс планне ирттерсе тултарассишĕн тăрăшса ĕçлер!

Кенигсбергра Хĕрлĕ Çар геройĕсен памятникне уçни

КЕНИГСБЕРГ, октябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 30-мĕшĕнче Кенигсбергра çав хулапа крепоçа штурмланă гвардеецсен-геройсен памятникне уçнă.

Вăтаçĕрти урамсенче ирхине тĕрлĕ йышши çарсен гварди чаçĕсем йĕркеллĕн тăрса тухнă. Памятника чаплăн уçассине кĕтсе, Кенигсберга штурмланă воинсем хăйсен çапăçури ялавĕсемпе тăраççĕ. Вĕсем Мускавран пуçласа гитлеровецсен Хĕвелтухăç Пруссири юлашки тĕрекĕ пулса тăракан Флише-Нерунг сăмсахĕ патне çитиччене çапăçса пынă. Хула çурчĕсем çийĕнче гранитран тунă памятникăн йĕппи курăнса тăрать.

Памятник патĕнчи вăхăтлăх тунă трибуна çине ирхине 11 сехет тĕлĕнче Хĕрлĕ Çарăн чапа тухнă генералĕсем, йышлă хăнасем хăпарса тăраççĕ. Хăнасем хушшинче СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕн заместителĕ—Литва ССР-ĕн Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ Палецкис юлташ тата Мускаври Свердлов районĕнчи ĕççыннисен представителĕсем пур.

11 сехетре площаде гварди генерал-полковникĕ Галицкий пырать. Парад командующийĕ гварди генерал-лейтенанчĕ Иванов панă рапорта итлесен, Галицкий генерал-полковник трибуна çине хăпарать. Вăл тăшмана çĕнтермешкĕн хастарлăн çапăçнă боецсене, сержантсене, офицерсене тата генералсене сăмах калать.

Галицкий юлташ хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене асăнма сĕнет. Ялавсене таяççĕ. Хурлăхлă марш калаççĕ.

— Совет халăхĕ,—тет Галицкий юлташ,—хамăр Тăван çĕршывшăн çапăçса вилнĕ воинсене нихăçан та манмĕ, Хĕрлĕ Çар вĕсене ялан асра тытĕ.

Совет Союз Геройĕсен—гварди генерал-майорĕн Гурьевăн, гварди полковникĕн Полецкин, гварди майорĕн Сергеевăн, хăйĕн батальонне Орша хулинчен пуçласа Кенигсберг патне çитиччен илсе пынăскерĕн, тăватă орден кавалерĕ пулса тăракан хастарлă санитаркăн Елена Когалюгăн ячĕсене ĕмĕрех юратса асăнĕç.

— Çĕнтерÿ хĕвелĕ пирĕн калама çук пысăк çĕршыври хуласемпе ялсене, тÿремсемпе тусене çутатса тăрать,—тет юлашкинчен Галицкий юлташ.—Тахçан кĕтнĕ мир вăхăчĕ килсе çитрĕ. Совет халăхĕ, Совет Союзĕн хăватне татах та ытларах çирĕплетес тесе, темиçе хут вăйлăрах ĕçлеме пуçларĕ.

Сывă пултăр пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр халăхсен аслă çулпуçĕ Совет Союзĕн Генералиссимусĕ Сталин юлташ!

Галицкий юлташăн çак юлашки сăмахĕсене красноармеецсем «ура» кăшкăрса йышăнаççĕ. Совет Союзĕн гимнĕ чаплăн янăраса каять, хулара артиллери салючĕн хăватлă сасси илтĕнсе каять.

Унтан Палецкис юлташ сăмах тухса калать. Вăл Белоруссири 3-мĕш фронтăн воинĕсене-гвардеецсене, Совет Литвине ирĕке кăларнăскерсене, тата Кенигсберга штурмланă геройсене, Литва халăхĕ ячĕпе хĕрÿллĕн саламлать.

Икĕ хутчен Совет Союзĕн Геройĕ ятне илнĕ генерал-лейтенант Кошевой, Çар Совечĕн членĕ гварди генерал-майорĕ Куликов тата Мускаври Свердлов районĕнчи ĕççыннисен представителĕ Кирьянов юлташ хĕрÿллĕ сăмахсем тухса калаççĕ.

Фанфарăсем чаплăн янăраççĕ. Гвардеецсем памятник çинчен пире сирсе илеççĕ. 26 метр çÿллĕш чаплă обелиск курăнса каять, унăн тăрринче 5 кĕтеслĕ çăлтăр. Обелиск тавра гранитран тунă çурма çаврака стена туса лартнă. Обелиск çине «Совет халăхĕ çине юратса тата тав туса асăнĕ. Кенигсберга штурмланă геройсене мухтав!» тенĕ сăмахсем çырса хунă тата çав хулапа крепоçшăн пынă уйрăм çапăçусене кăтартса панă. Памятник умĕнче гранит çинче—бронзăран тунă чечек кăшăлĕ, ун çине «СССР Оборона Халăх Комиссарĕнчен Совет Союзĕн Генералиссимусĕнчен Сталинран» тесе çырса хунă. Унтах Балтика çывăхĕнчи 1-мĕш фронт, Белоруссири 3-мĕш фронт тата 11-мĕш гварди армийĕн Çар Совечĕ ячĕпе бронзăран туса хунă чечек кăшăлĕсем выртаççĕ. Постамент çинче Совет Союзĕн Геройĕсен Гурьевпа Полецкин кĕлеткисене туса лартнă.

Оркестр чаплă марш калать, памятник умĕнчен пехотинецсем, автоматчиксем, пулеметчиксем, артиллеристсем, танкистсем утса пыраççĕ, вĕсене икĕ хутчен Совет Союзĕн Геройĕ ятне илнĕ генерал-лейтенант Кошевой, гварди генерал-майорĕ Иванов тата Хĕрлĕ Çарăн чапа тухнă ытти генералĕсем ертсе пыраççĕ.

Гвардеецсен чаплă маршĕ сывлăшри парадпа вĕçленет. Кенигсберг урлă эскадрильйăсем йĕркеллĕн вĕçсе иртеççĕ.

Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕ пĕлтерни

ЛОНДОН, октябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕ сентябрĕн 30-мĕшĕнче икĕ лару туса ирттернĕ. Ирхи ларура Бирнс, каçхи ларура Бидо председатель пулнă. Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕн çитес ларăвĕ октябрĕн 1-мĕшĕнче каçхине 6 сехетре пулать.

ИРАНРИ ПРОФСОЮЗСЕН ЦЕНТРАЛЬНЫЙ СОВЕЧĔ ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОФСОЮЗСЕН КОНФЕРЕНЦИНЕ ЯНĂ ТЕЛЕГРАММА

ТЕГЕРАН, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). «Шефаг» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Иранри профсоюзсен центральнăй совечĕ пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен Парижри конференцине телеграмма янă. Унта вăл правительство рабочисене хĕсĕрлени çинчен тĕплĕн каласа панă. Телеграммăра тата çапла каланă: пирĕн пĕтĕм тĕнчери конференцие кайма суйланă делегатсене тытса хупнă, анчах та часах Парижа çĕнĕрен суйланă делегатсем тухса кайĕç, тенĕ.

ГРЕЦИРИ СЫЛТĂМРИ РЕСПУБЛИКАНЕЦСЕН ЛИДЕРĔСЕМ СУЙЛАВСЕНЕ ХАТĔРЛЕССИ ÇИНЧЕН

АФИНЫ, сентябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Грецири сылтăмри республиканецсен партийĕсемпе ушкăнĕсен лидерĕсем Софулис, Кафандарис, Цудерос, Пластирас, Милонас премьер-министр патне пынă та çапла каланă: суйлавсене ирĕклĕн ирттерме условисем туса паричченех эпир парламент суйлавĕсене хутшăнасси çинчен сăмах та хускатмастпăр. Çав условисенчен пĕри — çĕнĕрен чăн-чăн суйлав списокĕсем çырса хатĕрлесси тата кирлĕ йĕрке туса хурасси пулса тăрать, тенĕ. Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, республиканецсен лидерĕсем премьер-министра «çар союзĕ» (монархистсен çарти организацийĕ) активлăн ĕçлени çинчен каласа панă, фашистла-монархистла çар йышши организацисене — «Х» ятлине, Эвен организацине тата ыттисене те салатса яма тата провинцири монархистсен бандисене пĕтерсе лартма ыйтнă. Софулис çапла каланă: эпĕ Ламия хулине каяймастăп, мĕншĕн тесен унти бандăн пуçлăхĕ Сурлас мана унта пырсанах вĕлерессĕн, тенĕ. Республиканецсен партийĕсен руководителĕсем парламента пропорциллĕ системăпа суйлама кирли çинчен каланă.

Вулгарис çапла каланă пулать: эпĕ суйлава 1945 çулта туса ирттерессĕн, анчах та правительство çав ыйтупа решени йышăнман-ха, тенĕ пулать.

Айăпланă çынсене каçарма кирли çинчен тата хĕсĕрлеме пăрахасси çинчен каласа, сылтăмри республиканецсен лидерĕсем çапла каланă: эпир халь кăларса тăратнă условисене пурнăçа кĕртмесен, пирĕн партисем суйлава хутшăнмаççĕ, тенĕ.

ИНДО-КИТАЙРИ ЛАРУ-ТĂРУ

ДЕЛИ, сентябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Делири радио çапла пĕлтерет: союзниксен Индо-Китайăн кăнтăр пайĕнчи главнокомандующийĕ демонстрацисем тата пухусем тума чарнă. Британи çарĕсемпе Франци полицийĕ çеç хĕçпăшал йăтса çÿреме пултараççĕ. Ирхине 9 сехетрен пуçласа каçхине 5 сехетчен ниçта та тухса çÿреме юрамасть.

ИНДИРЕ ЦЕНТРТИ ТАТА ПРОВИНЦИСЕНЧИ ЗАКОНСЕМ КĂЛАРАКАН ПУХУСЕНЕ СУЙЛАССИ

ДЕЛИ, октябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсенче Индире центрти тата провинцисенчи законсем кăларакан пухусене суйлама кандидатсем тăратмалли тата суйлавсем хăçан пулмалли сроксене пĕлтернĕ: кандидатсене октябрĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа ноябрĕн 10-мĕшĕччен палăртса хумалла. Суйлавсем ноябрĕн 21-мĕшĕнче пуçланаççĕ те декабрĕн 10-мĕшĕнче пĕтеççĕ. Провинцисенчи законсем кăларакан пухусене кама суйлани декабрь уйăхĕн варринче паллă пулать. Центрти законсем кăларакан пухăва суйланă çĕнĕ депутатсене çитес çулхи февраль уйăхĕн пуçламăшĕнче пухаççĕ.

ФРАНЦИРИ КАНТОНСЕНЧИ СУЙЛАВСЕН ИККĔМĔШ ТАПХĂРĔНЧИ ИТОГСЕМ ÇИНЧЕН МАЛТАНЛĂХА ПĔЛТЕРНИ

ПАРИЖ, октябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви Францири кантонсенчи суйлавсен иккĕмĕш тапхăрти итогĕсене пĕлтернĕ. Ку пĕлтерĕве пĕрремĕш тапхăрти итогсене те кĕртнĕ. Пурĕ 2.487 депутат çинчен пĕлтернĕ (мĕн пурĕ 3.028 депутат суйламалла). Çаксем суйланнă: социалистсем — 704 çын (1939 çулта 310 социалист суйланнă пулнă), коммунистсем—286 çын (1939 çулта 69 çын суйланă пулнă), радикал-социалистсем—491 çын (1939 çулта 856 çын суйланнă пулнă), сулахайри ытти партисенчен 131 çын суйланнă (1939 çулта 102 çын суйланнă пулнă), халăхпа республика юхăмĕн партийĕнчен 181 çын суйланнă, ватамрисенчен 393 çын суйланнă (1939 çулта 372 çын суйланнă пулнă), центрти партисенчен 331 çын суйланнă (вăрçăччен вĕсем 578 вырăн йышăнса тăнă).

КĔСКЕН

▲ Следстви комиссийĕ йышăннă тăрăх, Пьер Лавале верховнăй суд октябрĕн пуçламĕш кунĕсенче суд тума пуçлать.

СОВЕТ СОЮЗĔ ТРИПОЛИТАНИРЕ МĔН ТУМА ШУХĂШЛАНИ ÇИНЧЕН АМЕРИКА КОРРЕСПОНДЕНЧĔ ÇЫРНИ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). «Чигаго Сан» хаçатăн Вашингтонри корреспонденчĕ Кендрик çапла çырать: Совет Союзĕ Триполитание пăхса тăмашкăн хăйне пама ыйтни колониллĕ державăсенни пек империалистла туртăмсенчен килмест. Йăлтах урăхла, «Совет Союзĕ кивĕ империализм хуçаланнă пирки кая тăрса юлнă çĕршыва пĕр вунă çул хушши те пулин ак мĕн пирки тытса тăрасшăн: вăл, коллективлă хуçалăх меслечĕсемпе ĕçлесе тата тĕрлĕ рассăсемпе халăхсем пĕр-пĕринпе мĕнле çыхăнса тăмалли çинчен калакан çĕнĕ шухăшсемпе ĕçлесе, кая юлнă çĕршывăн пурнăçне лайăхлатас ĕçре мĕн тума пуррине кăтартса парасшăн... Молотов вăл Вăтаçĕрти Азири таджиксемпе узбексем тĕлĕшпе 25 çул хушшинче мĕн тунине тата çавăнтан мĕнле результатсем пулнине шута илсе сĕннĕ; çав таджиксемпе узбексем Триполитанире пурăнакан арабберберсен тăванĕсем пулса тăраççĕ».

Кендрик шухăшĕпе, Совет Союзĕ Ливире коммунизм тума шутлать тенипе никам та ĕненес çук. Триполитание пăхса тăма Совет Союзне парас пулсан, ăна пĕр-пĕр паллă условисемпе панă пулĕччĕç. Анчах, апла пулсан та, Итали империйĕн чи кая тăрса юлнă колонийĕ пулнă Триполитание пăхса тăрса, Совет Союзĕ унта сивчире, проказăна тата туберкулеза пĕтерес тĕлĕшпе опытлă ĕçсем нумай тума пултарнă пулĕччĕ, вăл тата çĕре шăварас, çĕрмамăкĕ лартса ÿстерес тĕлĕшпе пĕтĕм тĕнчешĕн паха çынсем тума пултарнă пулĕччĕ.

Паллах ĕнтĕ, чи малтан Триполитанири берберсене, туарегсене, арабсене, еврейсене тата негрсене граждан прависем панă пулĕччĕ.

Çакăн хыççăн Кендрик Англин ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин йăлтах урăхла каланă сăмахĕсене илсе кăтартать. Çав министерство Ливири арабсене, «тÿрленме пултарайман юлхавсем», тенĕ, берберсене—«Европăри влаçсене хирĕç тăракан çынсем» тесе ят панă. Кендрик çапла калать: Ливири совет администрацийĕ Францин Ливипе юнашар выртакан колонине Алжира тата Египета шухăшлаттарнă пулĕччĕ, тет. Çапла ĕнтĕ, Кендрик хĕвеланăçĕнчи демократисене колонири халăхсен пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеме сĕнет. Финикиецсем, грексем, римлянсем тата ыттисем те Ливие пыра-пыра çĕнтернĕ. Совет Союзĕ çеç унта Ливин тусĕ пулса пырать.

ГЕРМАНИН АМЕРИКА ÇАРĔСЕМ ОККУПАЦИЛЕНĔ ПАЙĔНЧЕН 11 ЗАВОДА ТУРТТАРСА КАЯÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Эйзенхауэр штабĕ Германин Америка çарĕсем оккупациленĕ пайĕнчен 11 промышленность предприятийĕн оборудованине турттарса тухма хушнă. Çав оборудование ăçта ямаллине союзниксем татса парсанах ăна илсе каяççĕ. Кун умĕн 5 заводри оборудованпе турттарса тухма хушнăччĕ. Халь турттарса тухма хушнă предприятисем хушшинче станоксем тăвакан 3 завод, 3 электропромышленность завочĕ, пĕр оптика завочĕ тата моторсем тăвакан пĕр завод пур.

ГЕРМАНИЕ ВАЙПА ИЛСЕ КАЙНĂ ÇЫНСЕН ПУРНĂÇНЕ ЛАЙĂХЛАТАССИ ÇИНЧЕН ТРУМЭН ЭЙЗЕНХАУЭРА ЯНĂ ÇЫРУ

ВАШИНГТОН, сентябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Шурă Сурт (США президенчĕ ĕçлесе пурăнакан сурт) Трумэнăн Эйзенхауэра августăн 31-мĕшĕнче янă çырăвне пичетлесе кăларнă. Çав çырура Трумэн çапла калать: Австрие тата Германие вăйпа илсе кайнă çынсен пурнăçĕ Потсдамра йышăннă политикăпа килĕшсе тăмасть, тет. Эйзенхауэра çав вăйпа илсе кайнă çынсене концентрациллĕ лагерьсенчен кăларттарма тата вĕсен пурнăçне лайăхлаттарма чĕнет, çак ĕçре хăйне пăхăнса тăракан çынсене çирĕппĕн хушма сĕнет.

Шурă Çурт çавăн пекех тата Америкăн ятарласа янă представителĕ Гаррисон çырнă отчета пичетлесе кăларнă. Çак отчетра вăйпа илсе кайнă çынсем ытти çĕршывсенче, уйрăм илсе кăтартсан — Австрипе Германире, мĕнле пурăнни çинчен каланă.

Трумэнăн çырăвĕпе пĕрле Эйзенхауэр патне Гаррисон отчечĕн копине те янă. Трумэн çырăвĕнче çапла каланă: вăйпа илсе кайнă çынсене вырнаçтарма кирлĕ çуртсене Америка офицерĕсен нимĕç гражданĕсенчен туртса илмелле, çапла майпа нимĕçсем хальхи лару-тăрушăн ответлă пулмалла тесе Потсдамра йышăннине пурнăçа кĕртмелле, тенĕ. Трумэн Гаррисонăн çак сăмахĕсене илсе кăтартнă: хальхи вăхăтра американецсем «еврейсене нацистсем тыткаланă пекех тыткалаççĕ, уйрăмлăхĕ кунта çакă анчах: американецсем еврейсене вĕлерсе пĕтермеççĕ. Нумай еврейсем концентрациллĕ лагерьсенче пурăнаççĕ, вĕсене унта эсэсовецсем вырăнне Америкăн çар хуралĕсем хуралласа тăраççĕ. Çакă çапла шухăшлаттарать: нимĕç халăхĕ, çаксене курса, американецсем нацистсен политикинех пурнăçа кĕртеççĕ е сахалтан та çав политикăна чăтса тăраççĕ, тесе шухăшламĕ-ши».

Сад пахчи тăваççĕ

Чкаловски районри «Гвардеец» колхозра пахчаçимĕç ĕрчетессипе А. П. Заплаткин юлташ ĕçлет. Çак ĕçре нумай çул хушши ĕçленĕшĕн ăна кăçал правительство «Ĕçри хастарлăхшăн» медаль парса наградăланă. Кăçал «Гвардеец» колхоз çĕнĕрен тунă икĕ хутлă клуб çывăхне 1,5 гектар çĕр уйăрнă. Çак лаптăк çинче сад пахчи тума йышăннă. Сад пахчи пулмалли вырăна карта тытса çавăрнă тата улмуççипе чие çырли йывăççи лартма пуçланă. Çак ĕçе ертсе пырассине А. П. Заплаткин юлташ хăй çине илнĕ.

Çак районри Киров ячĕпе тăракан колхозра та сад пахчи тăваççĕ. 250 тĕп улмуççи тата 500 тĕп чие çырли йывăççи лартнă. Сад пахчи тăвас ĕçе ватă колхозник Плечев юлташ ертсе пырать.

ÇĔРУЛМИ АВРИНЧЕН СИЛОС ХЫВАÇÇĔ

Октябрьски районри Кивтукайри «Сталь» колхозра (ферма заведующийĕ Л. Мясникова юлташ) выльăх-чĕрлĕх валли сĕтеклĕ апат ытларах хатĕрлеме тăрăшаççĕ. Ку колхозри фермăра ĕçлекенсем çак кунсенче 70 тонна кĕрекен икĕ шăтăка çĕрулми аврипе усă курса силос хывнă.

Ответлă редактор заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн —2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-99, промышленность пайĕн — 3-97, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00415 Типографи № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. б. 59 42 п. л. Тираж 16.000 экз.